Геннадий ЮМАРТ

# ЧĂВАШ ТĂРĂХĔ — ХУСАН — ПĂЛХАР

## *А. С. Пушкин 1833 çулта Урал тăрăхне çул тытнă май*



Пушкин чăвашсем çинчен мĕнмĕн тесе çырса хăварнă-ши? Вăл пире мĕнле хакланă-ши? Çак ыйтусем пирĕн вулакана шухăша ямасăр пултараймаççĕ. Кун пирки юлашки çулсенче тĕпчевçĕсем сахал мар çырчĕç. Уççи-хуппи вара филологи ăслăлăхĕсен докторĕн А. Иезутовăн статйинче палăрса çитрĕ. Сумлă тĕпчевçĕ (вăл хăй те Чăваш енче — Етĕрнере çуралса ÿснĕ) аслă поэт пирĕн халăх çинчен каланă паллăрах сăмахсене акă еплерех ăнлантарчĕ.

Поэт чăваш ятне чи малтанхи хут 1820 çулхи «Мои замечания о русском театре» статьяра асăнать. «Должно ли укрываться в чухонскую деревню, дабы сравнивать немку Ленору с шотландкой Людмилой и чувашкой Ольгою». Кунта сăмах П. А. Катенинăн «Ольга» баллади çинчен пырать. Ку балладăна К. Бюргер хайлавăн куçарăвĕ тесе шутламалла. Малтан ăна В. Жуковский куçарнă та хĕр сăнарне пăсса кăтартнă («ослабил дух и формы его образца» тет Пушкин), П. А. Катенин çакна туйса илнĕ те авторăнни пек çут çанталăка çывăх хĕр-пике сăнарĕ туса çырнă. Пушкин çакна палăртса кайран çапла каланă: «Катенин это чувствовал и вздумал показать нам Ленору в энергичной красоте ее первобытного создания: он написал «Ольгу». Çапла вара «Чăваш хĕрĕ Ульха» Пушкиншăн çут çанталăк пилленĕ «чĕрĕ» илемлĕ хĕр шутланнă. Хăй вăхăтĕнче çакна хăш-пĕр критик урăхла ăнланнă та шăв-шав çĕкленĕ, çавна май шăпах Пушкинăн çинчен хăй шухăшне çапла пĕлтернĕ: эппин вăл 1820 çулччченех чăваш хĕрĕсене куркаланă-ши? Е ку сăмаха экзотикăшăн, цивилизаци пăсман çын сăнарне пĕлтерес тесе çеç Раççейĕн центрĕсенчен аяккарах вырнаçнă халăх ятне асăннă? Кун пирки ятарласа никам та шыраман. Болдино ялĕ чăнах та Чăваш çĕрĕнчен инçе мар. Анчах 1820 çулччен поэт ку еннелле килсе çÿрени паллă мар. Чăвашсем ăçта вырнаçнине вăл пĕлмен мар ĕнтĕ (çамрăк чухне сăвăç Н. Карамзин историне питĕ юратса вуланă). Тен, кĕнекесенче çырнине куркаласа çеç асăнман-ши вăл çак сăмаха?

А. Авдонин-Бирючевский палăртнă тăрăх, Пушкин чăвашсем çинчен лицейре вĕреннĕ чухнех илтме пултарнă. Поэтăн килти библиотекинче П. С. Палласăн «Путе-

шествие по различным провинциям Российского государства» ятлă кĕнеки пулнă. Çав кĕнекере Вăтам Атăл, Çарăмсан тата Сук тăрăхĕнчи чăвашсем çинчен нумай çырса кăтартнă.

Кунсăр пуçне сăвăçăн И. И. Лепехинăн тата П. И. Рычковăн çулçӳрев кĕнекисем те пулнă. Унта та чăвашсем пирки каланă.

Иккĕмĕш хут Пушкин пирĕн халăх ятне 1824 çулхи çĕртмен 7-мĕшĕнче П. А. Вяземский патне янă çырура асăннă. Унта çапла каланă: «Критики у нас, чувашей, не существует...» — тенĕ. Хăшĕпĕри кунта поэт вырăссен ăс-хакăл шайĕ критика аталанмалăх çук тесе каланă пек ăнланчĕç. А. Н. Иезутов шучĕпе апла мар-мĕн: «Слово «чуваши» выступало у Пушкина как своего рода синоним естественности, природности и органичности». Çак шухăша поэт кайран та ытти çĕрте палăрта-палăрта иртнĕ иккен, кунта чăвашсене мĕскĕнлетни çук-мĕн.

«Пугачев кун çулĕнче» (1833) автор чăвашсене асăнмасăр иртмен. Хура халăх пăлхавçă Пăкач майлă çĕкленнине палăртса унта: «Мăкшă, чăваш, çармăс çыннисем вырăс пуçлăхсене пăхăнма пăрахнă», — тенĕ. Çыравçă кунта шăпах вырăнлă каланă: пĕр халăх теприне хирĕç тăман, «вырăс пуçлăхсене» хирĕç çĕкленнĕ. Кăрмăша илнĕ хыççăн Пугачев çарĕн пĕр ушкăнĕ Сăр урлă каçнă та Етĕрнене тытса илнĕ, кун çинчен кĕнекере çапла пĕлтернĕ: «Пăкач «çĕнтерӳ» ячĕпе чăвашсене хысна эрехне валеçсе пама хушнă», — тенĕ.

Пăлхав вăхăтĕнче çапла эрех ĕçсе савăнасси те, кайран патак çиесси те чăвашсен ытти халăх çыннисемпе, уйрăмах вырăссемпе пулса иртнĕ. Çакна Пушкин 1836 çулта «Капитан хĕрĕ» повеçĕн сиктерсе хăварнă сыпăкĕнче питĕ сăнарлăн кăтартса панă. Унта Петр Гринев каçхи сĕмлĕхре Атăл урлă каçнă чухне хăрушă сулă юхан шыв тăрăх юхса аннине курать: «Пире хирĕç сулă çине çирĕплетсе лартнă такан юхса килет... Эпĕ сиксе антăм та хăрушă юпасем хушшине лекрĕм. Çутă уйăх çакнă çынсен ирсĕрлетсе пĕтернĕ сăнпитне çутатать. Вĕсенчен пĕри — ватă чăваш, ...тепри — çирĕмсенчи вăйлă та маттур вырăс хресченĕ». Автор пăлхавçăсене ăшă кăмăлпа хаклать, çапла Атăлăн тури тăрăхĕнче пăлхава ытларах вырăссемпе чăвашсем хутшăннине палăртасшăн пулнă. А. Иезутов çак хыпарсене çапларах пĕтĕмлетсе калать: Пушкиншăн «чăваш» тенĕ ăнлав ку халăх çут çанталăкпа çураçуллă та хăйне курнăçланмасăр хăй хальлĕ тыткалать тенипе пĕр майлă («для Пушкина понятие «чуваши» прочно ассоциировалось с природой органичностью и безыскусной естественностью человеческого поведения и развития»).

«Пушкинпа чăвашсем» текен сăмах ку хыпарсемпе кăна вĕçленмест. Ытти хыпарсене пичетре сахалрах çутатнă е пачах та асăнман. Паллăраххи шутне сăвăç чăвашран тухнă мухтавлă çынпа, Никита Яковлевич Бичуринпа, çывăх пулнине кĕртмелле. Поэтпа паллă «китайçă» 1827 çулта Питĕрте паллашнă тесе шутлаççĕ, анчах сăвăç Бичурин ĕçĕсемпе унччен паллашма тытăннă-мĕн. Вĕсем пĕрпĕринпе ытларах тĕп хулари литература салонĕсенче тĕл пулнă. В. Ф. Одоевский кнеçĕн килĕнче тĕрлĕ шухăш-кăмăллă паллă çынсем пухăнса калаçнă. М. П. Погодин академик кунта Пушкинпа Бичурин пулкаланине ятранах асăннă. «Кунта хаваслă Пушкинпа китай çыннисем пек хĕсĕк куçлă Иакинф

атте тĕл пулатчĕç» тенĕ. Икĕ паллă çыннăн туслăхĕ çинчен Бичурин поэта хăй çырнă кĕнекесене парнелени те ĕнентерет. «Описание Тибета в нынешнем его состоянии» ятлă кĕнекине автор çакăн пек сăмахсем çырса панă: «Милостивому государю моему Александру Сергеевичу Пушкину от переводчика в знак истинного уважения. Апреля 26. 1928 г.» Тепĕр çулхине тĕпчевçĕ поэта хăйĕн тепĕр çĕнĕ кĕнекине («Сянь-цзы-цзинь, или Троесловие, с литографированным текстом») парнелет, ун çине те халал сăмахĕ çырать: «Александру Сергеевичу Пушкину от переводчика»). Ку кĕнеке çинчен пичетре тухнă ырă сăмаха Пушкин çырма пултарнă теççĕ, хăшĕ-пĕри ун авторĕ вăл пулмасан та сăвăç çав рецензипе алçыру хальлĕнех паллашма ĕлкĕрнĕ теççĕ (вăл «Литература хаçачĕн» чи пĕрремĕш номерĕнчех тухнă, ăна пичете унăн официаллă редакторĕсĕрех — Антон Дельвигсăрах хатĕрлесе панă).

Тĕпчевçĕсем шутланă тăрăх, Пушкинăн килти библиотекинче Бичуринăн ытти пысăк кĕнекисем те пулма пултарнă. Ку акă мĕнтен паллă: «Пугачев кунĕ-çулне поэт Бичуринăн ытти ĕçĕсем çине таянса çырнă, ăна май вăл Тухăç тĕпчевçине пысăка хурса хаклать: «Калмăксем тарса кайни çинчен чи тĕрĕс те кăмăла килнĕ пек улăштармасăр хыпарланăшăн эпир Иакинф аттене тав тума тивĕç, вăл тĕплĕн шыраса пĕлнисемпе унăн тӳрĕ кăмăлпа çырнă ĕçĕсем эпир Тухăç çинчен шутлама хăнăхнине калама çук уçăмлăн çутатса хак пачĕç. Кунта эпир вăл калмăксем çинчен пĕлтернĕ хыпарсене илсе кăтартатпăр, вĕсене унăн халиччен пичетленме ĕлкĕреймен ĕçĕнчен илтĕмĕр. Кунта сăмах «Историческое обозрение ойротов или калмыков» тĕпчев çинчен пырать, вăл пичетре 1834 çулта тухнă. Пушкин хăйĕн кĕнекинче Бичуринăн «Описание Чжунгарии и Восточного Туркестана в древнейшем и нынешнем состоянии» кĕнекипе те усă курнă. Атăлпа Урал тăрăхне çул çӳреве каяс умĕн Пушкина чăваш халăхĕн ывăлĕ Пугачев пăлхавне хутшăннă халăхсем çинчен тĕрлĕрен хыпарсем пĕлтерме, сĕнӳсем пама пултарнă.

Бичурин сĕннипех Пушкинăн Китая çитсе курас ĕмĕт çуралать. Ку вăл 1830 çулта пулнă. Ун чухне Шиллинг фон-Канштадт барон ертсе пынипе Китая ятарлă экспедици кайма хатĕрленнĕ. Иакинф манаха ăслăлăх эксперчĕ шучĕпе илсе кайма палăртнă, экспедици йышне Пушкинăн тепĕр пĕлĕшĕ те кĕнĕ. Шиллинг экспедици çыруçи пулма Пушкина палăртнă. Инçе çула тухма хавхаланнă поэт кăрлачăн 7-мĕшĕнче хăйне çак ĕçе хутшăнма патшаран ирĕк ыйтса çырать, анчах ун ыйтăвне тивĕçтермеççĕ. Хурав кĕтнĕ вăхăтра сăвăç хăй ĕмĕчĕ çинчен сăвă та çырса хунă:

Поедем, я готов; куда бы вы, друзья,
Куда б ни вздумали, готов за вами я
Повсюду следовать, надменной убегая:
К подножию ль стены далекого Китая,
В кипящий ли Париж, туда ли наконец,
Где Тасса не поет уже ночной гребец,
Где древних городов под пеплом
дремлют мощи,
Где кипарисные благоухают рощи,
Повсюду я готов. Поедем... но, друзья,
Скажите: в странствиях умрет ли
страсть моя?
Забуду ль гордую, мучительную деву,
Или к ее ногам, ее младому гневу,
Как дань привычную, любовь
я принесу?

Бичурин Çĕпĕртен Пушкинпа Дельвигăн «Литературная газета» хаçатне тата вĕсен «Северные цве-

ты» альманахне хăйĕн çырăвĕсене ярса тăрать. Вĕсенчен пĕри «Кяхтăри ĕçкĕ» ятпа хаçатра (1830), тепри «Байкал» ятпа альманахра (1831) пичетленет. Кун пек çыхăну тытма вĕсем малтанах калаçса татăлнă пулас. Пушкинпа Бичурин хушшинчи çыхăнусем çинчен П. В. Денисовăн «Жизнь монаха Иакинфа Бичурина» кĕнекере тĕплĕ çырса кăтартнă.

Кун хыççăн та Бичурин хăйĕн тусне манман: вăл 1835 çулта поэтăн сăввисене хăйĕн çывăх çыннисем урлă маньчжурла тата акăлчанла куçарса кăларма пулăшнă. В. Г. Родионов профессор пире сăмах вĕççĕн каланă тăрăх, Вольтерăн «Генриада» поэмине чăвашăн мухтавлă ывăлĕ вырăс поэчĕ сĕннипе вырăсла куçарма пултарнă.

1833 çулхи кĕркунне Пушкин Пугачев çинчен материалсем пухас тĕллевпе Оренбург тăрăхне Чăваш çĕрĕ-шывĕ урлă Хурăнлă çулпа каять. Поэт авăн уйăхĕн 4-мĕшĕнче Чулхуларан тухать, Станьялта лашасене улăштарать, Шупашкарта çĕр выртать (хăшĕ-пĕри Ĕсмĕлте çĕр каçнă теççĕ). Шупашкартан вăл Ĕсмĕле çитет, Карачра, Анчăккассинче (хальхи Тĕрлемесре) самантлăха чарăнать, çур çĕр иртсен икĕ сехетре Хусана çитет. Çул çинче Шупашкартан иртсен илтнĕ халапа хăйĕн кун кĕнекине çырса хунă, унта пуп хĕрĕсем Пугачев пăлхавçисенчен хăраса утă ури ăшне тарса пытанни çинчен каланă. Ку материалпа поэт хăй çырнисенче усă курман. Акă çав текст:

«Пугачев утă купи патĕнчен иртсе пынă, çав вăхăтра ăна пĕчĕк çеç йытă тапăннă, вара вăл çав утă купине салатса тăкма хушнă. Çакăнта улпутăн икĕ хĕрне тупнă: кăшт шухăшланă хыççăн вăл вĕсене çакса вĕлерме хушнă. Шупашкар патĕнчи смотритель каласа пачĕ».

Ку сăмаха поэт Шупашкартан Хусан еннелле кайнă чухне çырса илнине «записано за Чебоксарами» тени ĕнентерет. В. Станьял Шупашкара çитиччен илтнĕ тени тӳрре килмест. Пугачев Чăваш çĕрĕ урлă Шупашкартан анатарах иртсе кайни те çакна çирĕплетет. Хыпара калаканĕ, пирĕн шутпа, Çавал çывăхĕнчен пулма пултарнă. Вăл хăй пĕлтернĕ ĕç çинчен лайăх пĕлсе тăнăскер теме май пур. Сăмах май каласан, Пушкин хăйĕн «Пугачев историйĕнче» пăлхавçĕсем пирĕн тăрăхра çакса вĕлернĕ пупсене, улпутсене, салтаксене тата тĕрлĕрен тӳресене тĕплĕн шута илсе тухнă. Çакăнтан Пушкин документсем тăрăх кунти лару-тăрăва лайăх пĕлни курăнать.

Сăмах май çак хыпара пĕлтерме те кăмăллă. 1830 çулта «Литература хаçатĕнче» (10 №) Пушкинăн «О статьях кн. Вяземского» ятлă статйи пичетленнĕ. Унта: «Каким образом растолкуете вы мирному алеуту поединок двух французских офицеров? Щекотливость их покажется ему чрезвычайно странною, и он чуть ли не будет прав», — тенĕ вырăн пур. «Мирный алеут» тенĕ çаврăнăш вырăнне малтан автор «добрый чуваш» тесе çырнă иккен. Кайран вăл шухăша татах та витĕмлĕрех калас тесе Раççейри чи аякра пурăнакан халăх ячĕпе усă курнă теме пулать. Çапах хамăр халăх ятне асăннă çак тĕслĕх те Пушкин чăвашсене «ырă» халăх шутне кĕртсе хисеплени çинчен калать. Анăç Европа культурине илмен халăх та хăйне тивĕçлĕн хăй шухăшне палăртма пултарать — çапла шухăшлать поэт, тĕрлĕ халăхăн культури тĕрлĕ пулнине тата вĕсем пĕр пек тивĕçлĕ иккенне хисепе хурать.

Пушкин 1833 çулта Оренбург енчен таврăннă май та Чĕмпĕр енчи пирĕн тавралăхпа паллашать, тĕрлĕ çĕрти çынсемпе тĕл пулнах, анчах кун çинчен вăл ятарласа çырса хăварни çук. Çавах та пирĕн мухтавлă сăвăçăн кĕрĕкĕ аркинчен уртăнма (ун чапĕ çумне çыпçăнма) аякри ытти хыпарсем татах тупăнаççĕ. Питĕрте пурăннă чухне поэт акă чăвашран тухнă Петр Егоров архитекторăн ĕçĕсемпе (Çуллахи сад картипе, Мрамор керменĕн тата ытти çуртсен илемĕпе) киленме пултарнă. Çуллахи сад уншăн хулари юратнă вырăн пулнă. Кунта поэт хăйĕн тусĕсемпе тĕл пулнă, уçăлса çӳренĕ. Ăна çырав ĕçне хĕрсе пикенме «пил панă» Гаврила Державинăн мăн аслашшĕ чăваш мăрси пулнине те пĕлетпĕр. Болдино ялĕ чăваш çĕрĕнчен инçе маррине кура вăл тăрăха чăвашсем те сахалах мар çитсе çаврăннă-тăр. Çапла вара, аслă поэт пирĕн халăх çинчен чылаях пĕлме пултарни пирки калакан хыпар сахал мар иккен.

«Пушкин Хусанта чылай чарăнса тăрать, кунта вăл Пугачева курнă çынсемпе калаçать, хула таврашĕнче пăлхавçăсем тăнă тĕлсене тухса çӳрет, Е. Баратынскипе тĕл пулать. Унпа пĕрлех поэт хулари интеллигенципе паллашать. Кунта вăл уйрăмах хăй вăхăтĕнче Хусан университечĕн ректорĕ пулнă Карл Фукспа нумай вăхăт иртерет, унпа пĕрле хула таврашне тухса çӳрет, юлашки каçхине унăн килĕнче пулать. К. Фукс тата вăл пĕлекен çынсем каласа панисене илтсе, Пугачев çинчен чылай хыпар пухать, çав хушăрах Александра Фукспа икĕ сехете яхăн калаçса ларать.

А. Фукс чăваш культуришĕн пысăк ĕç туса хăварнă: 1833 çулта чăваш ялĕсене тухса çӳресе «Записки о чувашах» ятпа йăла-йĕрке очеркĕсен пысăк ярăмне çырнă, вăл 1833—1834 çулсенче «Заволжский муравей» журналта пичетленсе пынă, ун хыççăн ăна икĕ хутчен уйрăм кĕнекен кăларнă. Очерксене çырма вăл Пушкин Хусана пыриччен тытăннă, 1833 çулхи уйăхсенче Куславкка таврашĕнчи ялсенче çӳренĕ. Вырăс поэчĕпе тĕл пулса калаçни, Пушкин та аякри çĕрсенче материалсем пухма тытăнни çак ĕçе малалла тăсма хавхалантарнах. Иккĕшĕ тĕл пулса калаçнă чухне А. Фукс хăй чăвашсем хушшине тухса çӳрени çинчен, хăй мĕн-мĕн курни çинчен кĕскен те пулин асăнса иртме пултарнă. Хăйĕн аса илĕвĕсенче вăл ун çинчен нимĕн те шарламан (А. Фуксăн аса илĕвĕсем 1844 çултах пичетленнĕ. Унта вăл Пушкинпа мĕн-мĕн çинчен калаçнине тĕплĕ çырса кăтартнă). Вăлах хăй вырăс поэчĕпе тĕл пулнă каçах, ир енне, Пушкина халалласа сăвă çырнă, ăна ирхине поэт Хусантан тухса кайиччен Пушкин патне çитерме ĕлкĕрнĕ. Вăрăм сăвăра автор хăйсем патĕнче хăнара пулнă хавхаланупа тав тăвать. Çапла, А. Фукс хăй те сăвăсем çырнă, Пушкин ыйтнипе вăл ăна хăшне-пĕрне вуласа та панă (кун çинчен аслă поэт хăйĕн арăмĕ патне янă çырура та пĕлтернĕ). Çак хыпарсем чăвашсемпе Пушкин хушшинчи çыхăнусене пырса тивмеççĕ те пек, анчах вĕсем Фукссем урлă аякран та пулин хамăр культурăпа çыхăнни лайăхах курăнать.

А. Фукс пирки калаçу хускалнă май пĕр сĕмленĕве те пĕлтерес килет: К. Фукс çырнă тăрăх, унăн мăшăрĕн мăн кукашшĕ «тутар мăрси» пулнă. А. Фукс Хусанта çуралнă имĕш, анчах унăн çамрăклăхĕ Шупашкарта иртнĕ. Хĕрарăм-çыравçă тутар халăхĕн халапĕсем тăрăх вырăсла «Хусан

хулине пуçласа яни» сăвăлла повесть (поэма) çырнă. Хана Хусан хулине çĕнĕ çĕре куçарма сĕнекен Фатима пике пирки каланă май автор чăнах та хăйĕн авалхи тымарĕ çак хула таврашĕнче пулнине асăнса иртет:

И вот — чудесная краса!
Вот дань сей час тебе слеза;
Ты мне, Фатима, не чужая,
Моя землячка и родная;
С тобой чтоб ознакомить свет,
Я уже сделала обет.

А. Фукс халапри Фатима сăнарне çапла куççуль витĕр сăнлать, унпа мăнаçланать, çавăнпа ун çинчен тĕнчене пĕлтерме васкать. «Тутар мăрсисен» шутне чăвашсенчен тухнă çынсем те кĕнине шута илсен хĕрарăм-сăвăçăн юнĕнче Хусан ханлăхĕ чухнехи пирĕн мăн асаттесен юнĕ те чупма пултарнă. А. Фукспа пирĕн халăх хушшинчи тăванлăх пулма пултарни пире чыс кăна кӳрĕччĕ. Çав лару-тăрура вара А. Фуксăн Пушкина халалланă «На проезд А. С. Пушкина чрез Казань» ятлă сăвви пирĕн чуна тата ытларах ăшăтса тăрĕччĕ. Акă çав сăввăн хăш-пĕр сыпăкĕсем:

Тьма приятных сновидений
Наяву мечталась мне,
Вот какой-то чудный гений
Вдруг явился в тишине
И сказал так торопливо,
Подаря меня венком;
«Как должна быть ты счастлива:
Кто же посетит твой дом?
Тот поэт, чье посещенье
Праздник славный и у нас:
Мы в тот день все в восхищеньи,
И ликует весь Парнас...»

1836 çулта Пушкин Александра Фуксăн «Хусана епле никĕсленĕ» ятлă поэмăн 1-мĕш сыпăкне илет. Ăна атвор аслă поэт ыйтнипе «Современник» журналта усă курма ярса панă. Анчах Пушкин ăна пичете пама ĕлкереймен, вăл хăй лайăх пĕлекен çыннăн хайлавне вулаймасăр тăма пултарайман-тăр. Асăннă сыпăкра А. Фукс тутар халăхĕн халапĕсем тăрăх Пăлхар патшалăхĕн тĕп хули епле пĕтни тата Кивĕ Хусан хули пуçланса кайни çинчен каланă. Пушкин вĕсем çинчен вуласа пирĕн асаттесен аслă хулисен шăпине тата хăй 1833 çулта Пăлхар хулин ишĕлчĕкĕсене курса çӳренине аса илме пултарнă.

Ку самант çинчен Пушкин тĕплĕ çырса хăварни çук. Анчах çак лару-тăрура вăл хăй тахçан «Пĕлӳçĕ Олег çинчен хунă юрăри» «ăссăр хасарсене» аса илмесĕр иртейменех. К. Фукс шучĕпе, чăвашсем хасарсенчен хунаса кайнă. Çакăн çинчен вăл Пушкинпа калаçмасăр иртмен-тĕр. Хамăр историрен пĕлетпĕр ĕнтĕ: пирĕн халăхăн кунçулĕ хасарсемпе те тачă çыхăннă, унра хасар йăхĕсен юнĕ те пулма тивĕçлĕ. Çак йĕрпе шутласа кайсан, Пушкин пирĕн халăх шăпи çинчен те шухăша кайма пултарнă, çунатлă шухăш ăна каллех Бичурин патне илсе çитернĕ пулĕ. Тухăç халăхĕсен кун-çулне тĕпчесе палăрнă мухтавлă чăвашăн тăван ялĕ патĕнчен иртнĕ чухне те поэт хăй тусĕ пирки ыйтса пĕлкеленĕ ахăр. Çак сĕмленӳ тӳрре килмесси питех иккĕлентермест.